**МИНИСТЕРСТВО ПРОСВЕЩЕНИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ**

**Министерство образования и молодежной политики**

**Администрация Ибресинского муниципального округа Чувашской Республики**

**МАОУ "Андреевская ООШ"**

| РАССМОТРЕНО | УТВЕРЖДЕНО |
|---|---|
| педагогическим советом | директор |
| Протокол №1 от «28» августа 2025 г. | ________________________ |
| | Треньков А.В. |
| | Приказ №112 от «1» сентября 2025 г. |

Треньков Андрей Владимирович

Подписано цифровой подписью: Треньков Андрей Владимирович
Дата: 2025.11.12 14:44:50 +03'00'

# РАБОЧАЯ ПРОГРАММА

**курса внеурочной деятельности**

**«Родное слово» («Тăван сăмах)**

для обучающихся 6 класса

**д. Андреевка – 2025 г.**

## Ăнлантару çырăвĕ

Кашни вĕрентекен ачасемпе ĕçленĕ май тухса тăракан ыйтусене тĕпе хурса е пĕлӳ шайне ытларах ӳстерес тесе хăй умне тĕллев лартать. Урăхла каласан, эпир ăна татса паман ыйту (проблема) тетпĕр. Темиçе çул ĕçлекен вĕрентекенĕн çакăн пек ыйтăва палăртма та, ăна пурнăçлама çул-йĕр тупма та пĕлмелле.

Вĕренӳ ĕçĕнче пирĕн ума тĕрлĕ ыйту сиксе тухать. Урокран урока эпир вĕсене вĕренĕвĕн виçĕ тĕллевĕ урлă татса пама тăрăшатпăр. Кун пек ыйтусен шутне, тĕслĕхрен, çаксене кĕртетпĕр:

1) ачасен пуплевне аталантарасси;
2) ачасен çырулла пуплевне аталантарасси;
3) ачасен вĕренес кăмăлне çĕклесси;
4) илемлĕ вулава аталантарасси;
5) ачасен сăмах йышне пуянлатассм;
6) илемлĕх мелĕсене тупма хăнăхтарасси т ыт. те.

Эпир вĕренекенсемпе урокра çеç мар, кружокра та ĕçлетпĕр. Унта вара анлăрах тĕллев лартатпăр. Нумай вĕрентекен çакăн пек ĕçе пуçăнсан ачасен пултарулăхне аталантарас ыйтăва суйласа илет. Кружок ячĕ темле пулсан та тĕллевĕ пĕр.

Суйласа илнĕ ыйтăва татса пама малтан программа хатĕрлетпĕр. Ăна пĕр е темиçе çуллăха палăртма пулать.

Кашни шкултах вăл е ку енчен уйрăмах пултарулла ачасем пур: пĕри ӳкерет, тепри хайлать, виççĕмĕшĕ пуçватмăшсем тăвать, тăваттăмĕшĕ компьютерпа аван ĕçлет… Çакăн пек ачасен пултарулăхне пĕтĕçтерсе аталантармалли мел – чăваш чĕлхипе литератури кружокĕ.

Чĕлхе пĕр-пĕринпе хутшăнма питĕ кирлĕ хатĕр шутланать.Çавăнпа кирек камăн та хăйĕн тăван чĕлхине лайăх пĕлмелле, унсăрăн тĕрĕс калаçма та, мĕн калас тенине тĕрĕс çырса пĕлтерме те çук. Хамăр тăван чĕлхене лайăх пĕлни ытти чĕлхесене вĕренме самаях пулăшать.

Тăван чĕлхен тĕрлĕ ыйтăвне ачасем грамматика урокĕнче вĕренеççĕ. Теори материалĕ ачасемшĕн йывăр ан пултăр тесен чĕлхе факчĕсене урокра çăмăл чĕлхепе ăнлантармаллине кашни учитель аван пĕлет. Анчах ку та сахал-ха. Ачасене чĕлхе материалĕпе интереслентерме пĕлмелле, вĕсен ăс-тăнĕнче тăван чĕлхене лайăххрах, тĕплĕнрех, тарăнрах пĕлес туйăм çуратмалла, урăхла каласан, ачасене хамăр чĕлхен кăсăк факчĕсемпе, тĕрлĕ грамматика вăййисемпе илĕртмелле.

Вăйă вăтам класс ачисене вĕренме илĕртмеллли, вĕсен пуплевне аталантармалли паха майсенчен пĕри. Унпа учительсем шкул пурнăçĕнче анлă усă кураççĕ.

Пурте пĕлетпĕр ĕнтĕ урокра вăйă выляни – ачасемшĕн савăнăç. Вĕсенчен кашниех вăйăра мала тухасшăн, çĕнтерӳçĕ ятне çĕнсе илесшĕн. Тĕрĕс хурав пама ачан самаях шутлама тивет. Учитель ĕçĕн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри – ачана шухăшлама вĕрентесси. Шухăшлама, мĕн кирлине шыраса тупма хăнăхнă ачасем вĕренӳре те ĕлкĕрсе пынине кашни учитель лайăх ăнланать.

Тăван чĕлхен тĕрлĕ ыйтăвне вĕрентнĕ чух вылякан вăйăсем ытти дидактика вăййисенчен уйрăлса тăраççĕ, мĕншĕн тесен сасăсемпе (е сас паллисемпе), сăмахсемпе, предложенисемпе çыхăннă, çавăнпа ачасен пуплевне аталантарма та питĕ меллĕ. Унашкал вăйăсене сăмах е чĕлхе вăййи теме те пулать.

Урокра е урок тулашĕнче вылякан сăмах вăййисем çĕнĕ материала çăмăлрах, ытлашши тертленмесĕр ăнланса илме, ăша хывма пулăшаççĕ. Кирек мĕнле вăйă та ачасене вĕренӳ материалĕпе интересленме хистет. Вăйă выляса ăша хывнă чĕлхе материалĕ ачан ăс-тăн тĕнчинче тарăн та нумайлăха çирĕпленсе юлать.

**Элективлă курсăн тĕллевĕ:** шкул ачисен калаçу тата çыру пултарулăхне аталантарасси.

**Элективлă курсăн тĕп ыйтăвĕсем:**

- ➢ тăван чĕлхене юратма, хисеплеме вĕрентесси;
- ➢ ачасен вĕренес кăмăлне çĕклесси;
- ➢ ачасене сăмахсемпе вырăнлă та тирпейлĕ усăкурма вĕрентесси тата сăмах йышне пуянлатасси;
- ➢ текстпа ĕçлеме хăнăхтарасси;
- ➢ илемлĕх мелĕсене тупма хăнăхтарасси;
- ➢ калаçу тата çырулла пуплеве тĕрĕс йĕркелеме вĕрентесси;
- ➢ сăвă-калав хайлама вĕрентесси;
- ➢ ачасене хăйсен пултарулăхне аталантарса тĕрлĕ конкурспа олимпиадăна хутшăнма хавхалантарасси.

**Формăсемпе меслетсем:**

- çыхăнуллă текст йĕркелени;
- ыйту-хурав
- илемлĕ вулав
- рольпе вуласси;

**Вĕрентӳ технологийĕсем:**

- репродуктивлă шырав-тĕпчев;
- вăйă;
- ИКТ мелĕ;
- Тест

**Кĕтнĕ çимĕç:**

- пуплеве чăвашла тĕрĕс йĕркелеме пултарни;
- поэзи, проза сыпăкĕсене илемлĕ вулама пĕлни;
- олимпиадăсене, тĕрлĕ конкурса хастар хутшăнни.

## Элективлă курсăн ĕçĕ-хĕлĕн результачĕсем:

### Харкамлăх (личностные) результачĕсем

- Чăваш чĕлхи чăваш халăхĕн наци пурлăхĕ пулнине, Чăваш Республикинче вырăс чĕлхипе тан патшалăх чĕлхи пулнине ăнланни; тăван чĕлхепе ӳлĕмрен кулленхи пурнăçра, суйласа илнĕ профессире усă курм апултарни;
- Тăван чĕлхен илемлĕхне хаклама пултарни, тăван чĕлхене хисеплени, унпа мăнаçланни; чăваш пуплевĕн нормисене наци культурин пуянлăхĕ шайне лартса сыхласси кашни чăвашшăн пысăк тивĕç тесе йышăнни; пуплеве куллен-кун аталантарма тăрăшни;
- Вĕренекен хăй шухăшне, туйăмне палăртма усă куракан сăмахсем, грамматика хатĕрĕсем пуплевре йышлă пулни; ача хăй пуплевне (калаçнине те, çырнине те) сăнаса тивĕçлĕ хак пама пултарни.
- Вĕренекен халăх умне тухса калаçма пĕлни, шухăшауçăмлă палăртма пултарни.

### Пур предмета та вĕренме кирлĕ (метапредметные) результатсем:

- тăван чĕлхепе культура хушшинче тачă çыхăну пуррине пĕлни; чăваш чĕлхи уйрăм çынпа общество пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăннине ăша хывни;
- тăван чĕлхене пĕлни чăваш культуришĕн, халăхпуласлăхĕшĕнпысăкпĕлтерĕшлĕ пулнине, çавăнпа чĕлхене вĕренме тивĕç пуррине ăнланни;
- пуплевĕн тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма пултарни;
- чăваш чĕлхине тĕпчекен ăслăлăхăн никĕсне ăша хывни;
- чĕлхе ăслăлăхĕн тĕп ăнлавĕсене алла илни: чĕлхе вĕрентĕвĕ тата унăн тĕп пайĕсем; чĕлхе тата пуплев, пуплевпеусă курса хутшăнни, калаçу тата çыру; монолог тата диалог; пуплев ситуацийĕ; пуплевĕн функципе шухăшран килекен тĕсĕсем (калав, сăнлав, ăслав); текст, чĕлхе единицисем, вĕсен паллисем тата пуплевре усă курнă чухнехи уйрăмлăхсем;

- сăмаха фонетика, тытăмĕ, пулăвĕ, лексика енчен тишкерме пĕлни, сăмах майлашăвĕпе предложение синтаксис енчен тишкерни; текст тата ун содержанийĕ, тĕп паллисемпе тытăмĕ енчен, пуплевĕн функцире палăракан тĕсĕсене кура, чĕлхе уйрăмлăхсене пăхса, илемлĕх хатĕрĕсене шута илсе тишкерни;

**Унсăр пуçне çаксене тума пултараççĕ: (Предметные результаты)**

- сăмах пĕлтерĕшĕсене (паллăраххисене) ăнлантарма;
- синонимсем, антонимсем, омонимсем тупма;
- тема, тĕп шухăш, композици тупса палăртма;
- стиль тĕсĕсене; илемлĕх мелĕсене, фразеологизмсене уйăрма;
- илемлĕ, çыхăнуллă пуплев йĕркелеме;
- фактсемпе тĕрĕс усă курма;
- литература жанрĕсене: сăвă, калав, шӳт уйăрма;
- материал пухма; çынсен шухăшĕсене шута илме;
- план тума; хăйсен шухăшне тĕрĕс палăртма;

Шкулăн вĕренӳ планĕнче вĕренӳ çулĕ 34 эрнепе танлашать. Уроксем хыççăнхи ĕç 34 эрнепе танлашнине шута илсе «Тăван сăмах» («Родное слово») **элективлă курсăн** ĕç программине 34 сехетпе (эрнере 1 сехет) тунă.

## Кружокăн тематика планĕ

| № п/п | Заняти темисем | Сехетсен шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Пуплев. Пуплев тĕсĕсем | 1 |
| 2 | Мĕн вăл тĕрĕс пуплев? Вырăнти калаçусем тата литература чĕлхи | 1 |
| 3 | Лексика | 1 |
| 4 | Лексика | 1 |
| 5 | Кашни сăмахăн хăйĕн пĕлтерĕшĕ | 1 |
| 6 | Сăмах. Сăмахсен кун-çулĕ. Сăмах перекетлĕхĕ | 1 |
| 7 | Грамматика. Тĕрĕс çырар | 1 |
| 8 | Сăмахсен предложенири вырăнĕ | 1 |
| 9 | Орфоэпи. Тĕрĕс калаçар | 1 |
| 10 | Орфоэпи. Тĕрĕс калаçар | 1 |
| 11 | Мĕн вăл илемлĕ пуплев? | 1 |
| 12 | Чĕлхене илемлетекен мелсем | 1 |
| 13 | Чĕлхене илемлетекен мелсем | 1 |
| 14 | Сасăсемпе сас паллисен çĕр-шывĕнче | 1 |
| 15 | Сасăсемпе сас паллисен çĕр-шывĕнче | 1 |
| 16 | Сасăсемпе сас паллисен çĕр-шывĕнче | 1 |
| 17 | Сыпăк. Сăмахсен сăнчăрĕ | 1 |
| 18 | Сыпăк. Сăмахсен сăнчăрĕ | 1 |
| 19 | Пуплев пайĕсем. Япала, паллă ячĕ | 1 |
| 20 | Глагол | 1 |
| 21 | Предложени | 1 |
| 22 | Лото | 1 |
| 23 | Анаграммăсем | 1 |
| 24 | Анаграммăсем | 1 |
| 25 | Метаграммăсем | 1 |
| 26 | Метаграммăсем | 1 |
| 27 | Логогрифсем | 1 |
| 28 | Логогрифсем | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 29 | Ребуссем | 1 |
| 30 | Чайнвордсем | 1 |
| 31 | Пуç ватмăшсем | 1 |
| 32 | Пуç ватмăшсем | 1 |
| 33 | Шӳтлĕ ыйтусем | 1 |
| 34 | Шӳтлĕ ыйтусем | 1 |
| | | 34 сехет |

## Усă курмалли литература


1. Ю.М.Виноградов: Г.М. Виноградова. Орфографи словарĕ. Тĕрĕс çырмалли правилăсем. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн редакципе издательство пайĕ, 2002. – 304 с.
2. Р.Г.Иванова. Литература вăййисем. Шупашкар, 2001. – 36с.
3. В.В.Андреев. Сасă. Сăмах. Пуплев. Илĕртӳллĕ чĕлхе пĕлĕвĕ. 1 пайĕ.– Шупашкар, 2000. – 68с.
4. В.В.Андреев, Е.А.Андреева. Çыр та пĕлсе çыр: Вĕрентӳ пособийĕ. Шупашкар. 1999. – 127с.
5. Л.П.Сергеев, П.Н.Метин. Вĕренекенсен пуплевне аталантарасси. Сăнарлă пуплев (развитие речи школьников). Учитель библиотеки. Шупашкар, 2002. – 33с.
6. Горшков А.Е. Сăмах пултăр уçăмлă, шухăш пултăр витĕмлĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1981.
7. Метин П.Н., Мефодьев А.И. Литературăпа халăх сăмахлăхĕн ăнлавĕсем. Шкул словарĕ. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕрентӳ институчĕн изд-ви, 1997. – 80 с.
8. Метин П.Н., Сергеев Л.П. Сăнарлă калаçма вĕренер. – Шупашкар, 2005. – 104 с.
9. Михайлова З.П. Чăваш чĕлхи. Тĕрĕс çырма вĕренер.– Шупашкар, 2001. – 47 с.
10. Чернова Н.Н. Хăвăрт вулама, çырма вĕренетпĕр: Хăнăхтару пуххи. 2-мĕш пайĕ. Шупашкар: 1999. – 115 с.